

# Олимпиада…

- **Олимпиада**



# Хветĕр Уяр пултарулăхĕ

1.«Çул пуçламăшĕ» очеркра Хветĕр Уяр хăйĕн пурнăçĕнчи пĕр саманта мĕнле аса илсе çырнă?
2.Писателĕн юратнă ĕçе шутне мĕн кĕрет? Çавна вăл хайлавсенче мĕнле кăтартса панă?
3.Пурнăçĕнчи иккĕмĕш юратнă ĕçĕ шутне мĕне кĕртме пулать? Мĕнле тĕслĕхпе çирĕплетме пултаратăр?
4.«Чăваш халăхне –и, тутарсене пĕлӳ патне, çутта кам туртĕ? Сирĕн туртмалла…Ман шухăшпа килĕшетĕр-и?»- тесе Хветĕр Уяра кам каланă.
5.Хветĕр Уярпа Иван Мучи вырăс çыравçисем, тĕпчевçисем чăвашсем пирки каланă шухăшсене пухса мĕн ятлă кĕнеке кăларнă?
6.Ивук, Яка Илле, Ухтиван… хăш хайлаври сăнарсем?
7. Çыравçăн пурнăç çулне тĕрĕс кăтартăр: Хабаровс-Сухари-Матак-Сахалин-Черниковка-Шупашкар- Вăрçăра



# Йăнăшсене тӳрлетсе çырăр

1.Василий Митта  Шăмăршă районĕнче Аслă Арапуç ялĕнче çуралнă.
2.Поэт пурăннă çулсем: 1908-1967çç.
3.»Ан тив, хисеп те чыс та ан курам.
Пин юррăмран пĕри анчах юлайтăр»,- тесе çырнă «Тимĕр» сăвă ярăмĕнче.
4. «Пит маттур-çке Иванов бульварĕ» сăвва Нинăна халалласа çырнă.
5.Тăван чĕлхем! Таса хĕлхем
Парсам  пăлхавлă  чунăма.
Сăвва хорей виçипе çырнă.
6. «Кăмăлăмпа чунăм» сăвă пуххи кăларнă.
7.Миттана националист тесе 27 çуллăха тĕрмене хупнă.

# « Арçури » поэмăн содержанине пĕлетĕр – и?

1.Поэма мĕнле эпиграфпа пуçланать?
2.Хĕветĕр мĕншĕн вăрмана хĕвел ансан кайнă?
3.Поэмăри ĕçсем ăçта пулса иртнĕ?
4.Хĕветĕрĕн çемйинче миçе çын?
5.Хĕветĕр хăш ял вăрманĕнче арçури пурăнать тесе шухăшлать?
6.Хăравçă Хĕветĕре халапсенчи арçури мĕнле-мĕнле курăнать?
7.Поэмăри çак ваттисен сăмахĕсен вĕçĕсене каласа пĕтерĕр:

Йĕп чиксен те…
Пуян вилет…
Тăлăх турат пуличчен…

## Чăваш литератури тĕрĕслев ĕçĕ.
## 7 класс

**1.Эпика, лирика тата драма хайлавĕсен тĕп уйрăмлăхĕсене çырса тухăр.**

**2.«*Ванюк лашине пĕр хĕрхенмесĕр чуптарать, хытă çапать. Акă вăрмантан тухса тунката патнелле çитет.Аякранах çул хĕрринче хĕрлĕ япала курăнчĕ. Ванюк куç хупса иличчен тенĕ пек, ачи патне çитрĕ…*»**

**Çак сыпăка мĕнле произведенирен илнĕ? Хайлав авторне калăр. Кунта мĕнле тема хускатнă? Хайлавăн тĕп шухăшне палăртăр.**

**3.Вăрçă темипе çыхăннă мĕнле хайлавсем вуланă эсир. Кĕскен вĕсем çинчен хăвăр мĕн астунине çырса парăр.**
**Çак темăпа хăвăр пĕчĕк калав çыр**ăр.

# Кирлĕ сăмахсене лартса çырăр. Н.В.Шупуççынни

1.Н.В.Шупуççынни пултарулăхĕ... шкулĕпе çыхăннă. 2...1889 çулта Шупашкар уесĕнчи Иккассинче çуралнă. 3.Вăл ... «Виçĕ пальма», «Тавлашу», «Палестина турачĕ» сăввисене чăвашла куçарать.4. «Демон», «Змий страсти» поэмăсен витĕмĕпе ...çырать.5. Чĕмпĕрти шкул юбилейĕ тĕлне Николай Васильевич «...» сăвă çырнă.

# Викторина ыйтăвĕ

## А.Николаевăн «Юра асламăшĕ» калав тăрăх. Кашни ыйтăвăн хуравĕ пĕр сăмахран тăмалла

1.Юрăсем килте миçен пурăнаççĕ?
2. Асламăшне «ват супнă» тесе шутлакан-….
3. Асламăшне кӳрентермен çын- ….
4.Ачисем валли вăхăт тупайман этем-….
5.Кунĕпе ура çинче çӳрекен-….
6. Ачасене Юра асламăшĕ çинчен пĕлтерекен-….
7.Юрăн куçĕнчен пăчăртанса тухакан куççуль пĕлтерĕшĕ-…
8.Хайлав авторĕ-…

# Кирлĕ çĕрте нумай точка вырнне *ь* е ъ паллăсене лартăр.

**Кирлĕ çĕрте нумай точка вырнне *ь* е ъ паллăсене лартăр.**
**Тетрад...е, фестивал...те, феврал...ĕн, авиамодел...пе, водител…сем, истребител...тен, вермишел...шĕн, спектакл...те, фасол...сĕр, июл...е, сирен...ӳ, букварь...тен, тух...ю, çем...емĕр, с...ездра, циркуль…шĕн, декабрь..те, двигатель..пе, тетрадь…сĕр, кĕс.. ере, стат...юпа, Патăр... елелле, мăр...ере, под…езд.**

## *Ă, ĕ* сас паллисене тĕрĕс çырăр.

**Пуш уйахен веçенче**
**Хевел пахре ашатса;**
**Силпи чаваш яленче**
**Юр ирелче васкаса.**
**Тусем, сартсем хуп-хура**
**Юре кайса петнерен;**
**Тухать курак çап-çара**
**Хевел хыта хертнерен**
**Сиве, хаяр хел иртет,**
**Каять йерсе, хурланса;**
**Сиве куççульпе йерет,**
**Иртне куншан хуйхарса.**
**Путаксемпе, варсемпе**
**çемерелсе шыв керлет,**
**Анчах, менле йерсен те,**
**Хевел хертнеçем хертет.**

# Анавород «Таня» поэма тӑрӑх.




Х У С А Н К А Й